Выльăх-чĕрлĕх пăхакансен районти конкурсĕнчен

# Çĕннине алла илмесĕр аталану ик телейлĕ

**(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).**

Палăртнă вăхăта ăмăрту участникĕсем йышлă пухăнса çитрĕç. Кашниех вăхăт пуррипе усă курса Оринин-сен фермипе, кунти ĕç усло-



Патаккассинчи сĕт комплексĕ тирпейлĕхпе палăрать.

вийĕсемпе паллашать, хăйсем патĕнче пурнăçа кĕртме май пуррине шырать. Чылайăшĕ терĕмĕр те, анчах кунта конкурса хутшăнма "кăмăл туманнисене те" ятранах каласа хăвармалла. Ку "чыса" кăçал районти сĕт сăвакан 19 хуçалăхран К. Иванов яч. хис., "Передовик", "Сеятель", Чапаев яч. хис., Чкалов яч. хис. хуçалăхсемпе "Дружба" тата "Лидер" агрофирмăсем



Çамрăксем хушшинче В. Бычкова, О. Петрова, Н. Александров çаврăнăçуллăрах пулчĕç.

тивĕçрĕç. Паллах, унти ĕçченсем конкурса килес теменнине ĕненес килмест, анчах мĕн каласа е каламасăр "çăлăнчĕç-ши" вăл хуçалăх ертӳçисемпе зооветспециалисчĕсем? Ыйтăвĕ пур, анчах хуравĕ çук. Çакă çеç пурне те паллă, ку çулпа кайса йывăрлăхсене çĕнме çук. Ăсталăх вара ăмăртура туптанать.

Ăмăртăва район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ, ял хуçалăх пайĕн ертӳçи А. Н. Иванов уçрĕ.

– Ырă йăлана кĕнĕ çак лайăх конкурса кун йĕркинчен кăларманни эпир пурсăмăр та малалла пăхнине çирĕплететет. Пирĕн вара умри тĕллевсем пысăк. Вĕсене пурнăçлама çĕннине алла илмелле. Паянхи конкурса хутшăнса пирĕн хамăрăн çав çĕнĕлĕхсене алла илме хатĕр пулнине кăтартмалла, – терĕ конкурса хутшăнакансене ăнăçусем сунса Альберт Николаевич пĕлтĕрхи çĕнтерӳçĕсене Чăваш ялавне çĕклеме чĕнсе.

Хыççăн районти выльăх-чĕрлĕх отраслĕн аталанăвĕпе паллаштарса район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. Иванов сăмах каларĕ. Вăл паян фермăра ĕçлекенсем район экономикишĕн питĕ сăвапллă ĕç тунине, çак тытăмра "Оринино" хуçалăх тĕреклĕхĕпе палăрса тăнине тĕслĕхсемпе уçса çирĕплетсе пачĕ. Район пуçлăхĕ çĕннине алла илмесĕр малашлăх аталану ик телейлĕ пулнине палăртрĕ. Çĕннине алла илесси конкурсра курăнать те ĕнтĕ.

– "Оринино" хуçалăхĕн Патаккассинчи сĕт комплексне кĕрсен кунти кану çуртĕнче Турă кĕтесĕ пуррине тахçанах асăрханăччĕ-ха. Унти хĕвел çутипе шурăхнă Владимирти Турă амăш турăшĕ выраннне паян чиркӳре çутатнă хыççăн çĕннине парнелетĕп, – терĕ хăй ăмăртăва пушă алăпа килменнине палăртса Юрий Александрович турăша Р. Блинова ферма заведующине тыттарса.

Ăмăртăва килнĕ техник-осеменаторсемпе машинăпа ĕне сăвакан оператор-



Дояркăсем хушшинче Р. Бычкова, В. Макарова, Г. Ковалева ыттисемшĕн тĕслĕх пулчĕç.

сем Патаккасси фермин ĕçĕпе тĕплĕн паллашнă хыççăн хăйсен ăсталăхĕпе пултарулăхне ушкăна-ушкăна пайланса кăтартрĕç пулин те, кашни номинацирех ăмăрту çивĕч пулчĕ. Уйрăммăн илсен, конкурса килнĕ дояркăсемпе доярсем малтан теори пĕлĕвне кăтартнă хыççăн жюри членĕсем умĕнче сĕт сумалли аппарата вăхăтра сӳтсе пуçтарассипе тата ĕне сăвассипе, техник-осеменаторсем хăйсен ĕç йĕркипе тата ĕнесене искусствăлла майпа пĕтĕлентерес культура пĕлĕвĕпе ăмăртрĕç.

– Конкурса ирттерме çуллен хутшăннăран тата тăтăшах жюри членĕ пулнăран ĕне сăвакансемпе техник-осеменаторсен пĕлĕвĕ ырă еннелле улшăнни курăнать. Тăтăшах çак конкурса хутшăнакансен малтуртăмлăхĕ яр уççăн палăрать ĕнтĕ, – терĕ конкурссем вĕçленсе пынă май районти выльăх чирĕсемпе кĕрешекен станцин тĕп врачĕ Н. Яковлев. Специалист çапла хак пани – конкурсăн чи курăмлă енĕ. Чăнах та конкурса хутшăнакансем ăмăртăвăн нихăш енĕпе те çухалса кайманни вĕсем хăйсен ĕçĕнче чăн-чăн ăстасем пулнине çирĕплетрĕ.

Каçхи сăвăмпа вĕçленнĕ



Ăмăрту условийĕсем кашниншĕнех паллă, анчах кам çĕнтерĕ-ши?

конкурс çĕнтерӳçĕсене çапла пайларĕ. Çамрăксем хушшинче "Герой" хуçалăхран килнĕ Ольга Витальевна Петрована çитекенни пулмарĕ. Çиччĕмĕш çул фермăра машинăпа ĕне сăвакан çамрăк хĕрарăм юратнă ĕçĕпех 2003 çулта ЧР Президенчĕн стипендине тивĕçни паян та курăнать. Хастарскер икĕ ача ӳстерет пулин те, çак конкурса çулленех хутшăнать. 2005 çулта та вăл районти çамрăк дояркăсемпе доярсем хушшинче пĕрремĕш пулнăччĕ. Мĕнех, ĕçлесен ӳсĕм айккалла тармасть. Ун хыççăнхи вырăнсенче "Ударник" хуçалăхри Николай Иванович Александровпа "Волга" хуçалăхри Валентина Федоровна Бычкова.

Дояркăсем хушшинче Суворов яч. хис. хуçалăх ĕçченĕпе В. В. Макаровапа "Оринино" хуçалăх доярки Г.П. Ковалева хушшинче хăйне евĕр чăн-чăн ăмăрту пулчĕ. Кăçал Валентина Валериановна маттуртарах пулни палăрчĕ. Галина Пантелеймоновна иккĕмĕш вырăн йышăнчĕ. Виççĕмĕш вырăнта "Восток" хуçалăхри Регина Александровна Бычкова.

Арçын доярсем хушшинче "Чемеево" хуçалăхри Александр Михайлович Ефре-



"Ĕне сунă çĕрте арçынсем те махха памастпăр", – тет "Чемеево" хуçалăхри А. Ефремов.

мов уйрăм парнене тивĕçрĕ.

Çак кун тепĕр пысăк ăмăрту техник-осеменаторсем хушшинче иртрĕ. Кунта "Рассвет" агрофирмăран килнĕ Лариса Анатольевна Капирована çитекенни пулмарĕ. Хыççăнхи вырăнсенче Суворов яч. хис. хуçалăхри Фаина Николаевна Максимова тата "Оринино" хуçалăхри Вера Борисовна Ершова.

Яра куна тăсăлнă конкурс ăнăçлă иртрĕ. Ăна тивĕçлĕ шайра ирттерме май туса панăшăн конкурса хутшăнакансем "Оринино" хуçалăхăн тĕп зоотехникĕпе Р. Пушковапа Патаккасси сĕт комплексĕн заведующине Р. Блинована тата хуçалăх ертӳçине Ю. Шишокина тав сăмахĕ каларĕç.

**Анатолий БЕЛОВ.**



Ырăпа палăрнă В. Ершова, Л. Капирова, Ф. Максимова техник-осеменаторсем.

Йывăç лартмалли уйăха пĕтĕмлетсе

## Кăмартусем савăнтараççĕ

Район администрацийĕн пуçлăхĕн йышăнăвĕпе апрелĕн 15-мĕшĕнчен тытăнса майăн 15-мĕшĕччен районта йывăççем лартассипе тата тавралăха тирпей-илем кĕртессипе уйăхлăх иртрĕ. Паян ăна пĕтĕмлетме те кăмăллă. Çак вăхăтра пĕрлехи вăйпа Муркаш енре татах 52400 йывăç лартса хăварма пултартăмăр. Çакăнтан çуррине майлă иртнĕ çул лартнă лаптăксене çĕнетсе юсама кайрĕ. Кăçал Хорнуй, Çатракасси, Оринин ял тăрăхĕсенче уйрăмах нумай йывăç лартрĕç: 14 – 5 пин тĕп таран.

**Георгий СИМАКОВ,**
**район администрацийĕн çут çанталăк хӳтĕлевĕпе ĕçлекен тĕп специалисчĕ.**

## Ял культуришĕн

Çын çăкăрпа çеç тутă пулаймасть тенинче ватă асаттесем пысăк ăс хывса хăварнă. Культура тенине тишкерер-ха çак каларăш урлă. Нумай чухне сăмах культура çине çитсен пирĕнтен чылайăшĕ ташлас-юрлас, сцена çинче выляс ăсталăха ума тăратать. Пытармăпăр, çынсем ăмсанмалла ташлани-юрлани тата сцена çинче выляни – курма пыракансен культурăллă канăвĕ. Анчах сехетрен е икĕ сехетрен киле кайма тухсан ăçта лекетпĕр эпир? Кун пирки шутланă-и эсир? Кунта та культура кирлĕ мари-ха пире? Кил-тĕрĕшре, ял хушшинче, çула тухсан е улăха ансан... Çаксем пирки сăмахларĕ те хăйсемпе тĕл пулсан Якаткас-



синче пурăнакан Егор Григорьевич Васильев. Чунне уçса калаçнипе манăнне те, пĕрле пулнă юлташăмсенне те куççене уçрĕ. Кĕтмен-туман çĕртен ял культурин ыйтăвĕсем малти рете тухрĕç...

Аслăрах ăрури çынсем Якаткассинче кун пирки пĕрремĕш кун мар шутлаççĕ иккен. Шутлаççĕ те вăй çитнĕ таран ĕçне те тăваççĕ. Акă тăватă арçын кĕреçесем тытнă та Муркаш – Турай автоçул çинчен Якаткассинелле кĕрекен асфальт çул хĕррипе иртнĕ кĕркунне Чуманкассинчи вăтам шкулта вĕренекенсем 2,5 километр лартнă вăрман тăрăхне юсама пуçланă.

– Ял сăнĕ унта пырса кĕрекен çултан пуçланать. Иртнĕ кĕркунне шкул ачисемпе вĕрентекенсем çакăнта вăрман тăрăхĕ лартса ырă ĕç турĕç. Хĕл каçа çамрăк хунавсен пĕр пайĕ е сивĕ тивнипе, е шăшисем кăшланипе вилнĕ. Ачасен ырă пуçарăвне пĕрремĕш утăмрах пĕтме парас мар тесе ĕçе тухрăмăр та, – сăмах хушрĕç черетлĕ йывăç тĕмми лартнă хыççăн Юрий Герасимовпа Николай Николаев.

– Ял культури вăл хамăр лартнă йывăçран, пĕрле пулса тирпей-илем кӳнĕ тавралăхран, çакна хамăр ачасен чунне хывса хăварма пултарнинчен пуçланать, – терĕ темиçе хыр-чăрăш хунавĕ йăтса килнĕ Вячеслав Гордеев.

Арçынсен сăмахĕнчен вĕсем ку вăрман тăрăхне чăн-чăн ял илемĕ тăвасшăнни курăнчĕ. Урăхла епле-ха? Пурăна-киле кунта хыр-чăрăшсемпе юнашар улмуççи те пулĕ, чие-слива та ӳсĕ, кăнтăр енĕпе лартнă хурлăхансем çырла çиме чĕнĕç, ӳссе капмарланнă кедрсем Якаткасси енĕн палли пулĕç.

– Кедр пирĕн тăрăхра пулать-и вара? – ыйтатăп арçынсенчен.

– Часах мар, анчах пулать, – хуравларĕ çар службин ветеранĕ В. Гордеев. – Эпĕ хам алăпа 1968 çулта кедр лартнăччĕ те пĕлтĕр пуçласа унăн тăхăр йĕкелне (шишки) активсе пăхрăм.

Арçынсемпе уйăх каялла тĕл пулса ирттернĕ калаçуран пĕр пĕтĕмлетӳ турăм: ырă ĕç ырă çимĕçех парать.

**Анатолий БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

## Симĕслентĕр тăван ен

Йывăç лартмалли уйăхлăх вĕçленчĕ пулин те, вăл нумайлăха пирĕн асра ыррипе юлĕ. Çав тапхăрти "Йывăç ларт та ăна упра!" акцие Оринин ял тăрăхĕнчи Çеменкасси ял çыннисем те активлă хутшăнчĕç. Тăван тавралăха илемлетме 1000 чăрăш калчипе 800 тĕп хурăн лартрĕç. 30 çынна яхăн хутшăнчĕ унта. Ĕç пуçаруçи Валерий Иванович Вязов пулчĕ. Выранти ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Александр Сергеевич Суриков та ĕç вăхăтĕнче халăхран уйрăлмарĕ. Йывăç лартнă çĕрте шкулта вĕренекен А. Быков, А. Зайцев, Б. Михайлов т. ыт. те тăрăшулăхпа палăрчĕç. Паян вĕсен ĕçĕ пĕрремĕш çулçăсем кăларчĕ те ĕнтĕ.

**Елена КОЛБАСОВА,**
**Атапай шкулĕнче 7-мĕш класра вĕренекен.**

## Çурхи вăрманта

Ялта çурхи вăрманта пулман çын çуках та пуль. Мĕнле илемлĕ унта. Çапла мар-и? Тавралăх ешерме пуçласан тата симĕс тум тăхăнсан камăн унта пулса курас килмест-ши? Кунĕ аван, сар хĕвел тин кăна сарăлакан йывăç çулçисемпе выляса уçланкăри чечексене ăшă валеçнĕ вăхăтран асамлăраххи пур-ши тата? Мĕнле чăтса тăрăн çурхи кун вăрмана каймасăр? Çапла вара çу уйăхĕн пĕр хитре кунĕнче эпир те – Атапай шкулĕнче вĕренекенсемпе вĕрентекенсем – çурхи вăрмана çитсе килме калаççа татăлтăмăр. Вăрманпа пынă чух мĕн чухлĕ хитре чечек курмарăмăр пуль, анчах ачасем пĕрне те татма васкамарĕç. Ара, çакăнтан пуçланмасть-им-ха тавралăх илемĕ?!

Çут çанталăк илемĕпе киленсе вăрман уçланкинче чылайччен вăйăсем выляррăмăр, тĕрлĕ конкурссем ирттертĕмĕр, "Çут çанталăка тишкерер" викторина ирттертĕмĕр. Викторинăра ачасем пĕри тепринчен маттуртарах пулчĕç.

Çурхи вăрманта ирттернĕ кун пурне те кăмăла кайрĕ.

**Настя ЗАМКОВА,**
**Атапай шкулĕнче 8-мĕш класра вĕренекен.**